**ТӐВАН ҪӖРШЫВӐН АСЛӐ ВӐРҪӐ ПУҪЛАННӐРАНПА 80 ҪУЛ ҪИТНӖ МАЙ**

# Паттӑрлӑх – халӑх асӗнче



**СССР ҫине вӑрҫӑпа тапӑнса кӗнӗ усал та ирсӗр тӑшман ҫарне ҫӗнтерме, паллах, питӗ йывӑр пулнӑ: нумайӑшӗ амӑннӑ. Вилнӗ, хыпарсӑр ҫухалнӑ, ҫапах та пирӗн халӑх тата унӑн Хӗҫ-пӑшаллӑ Совет ҫарӗ тепӗр тӑватӑ ҫултан хӑрушӑ вӑрҫӑн вут-ҫулӑмне тӑшман йӑвинчех – Берлинта сӳнтерме пултарнӑ. Шел пулин те, вӑрҫӑра ҫухатусӑр Ҫӗнтерӳ тума май килмен. Ҫапӑҫу хирӗнче вилнисем хушшинче, акӑ, Алексей Романович Логинов лейтенант ячӗ те пур. Вӑл вӑрҫӑччен чылай районта Шалти ӗҫсен пайӗнче (ҫав шутра Элӗкре те) ӗҫлеме ӗлкӗрнӗ. Виҫӗ ҫул каярах Шупашкар хулин пӗр урамӗ ҫак паттӑр офицер ячӗпе хисепленме тытӑннӑ. Унсӑр пуҫне районти Халӑх сучӗн ҫурчӗ ҫинче те СССР паттӑрӗн Асӑну хӑми ҫирӗпленнӗ.**

Чӑваш кӗнеке издательстви 1980 ҫулта «Наши земляки – Герои Советского Союза» справочника 20 пин экземплярпа пичетлесе кӑларнӑччӗ. Ун тӑрӑх ҫакӑ паллӑ: кӗнекере 107 паттӑрӑн кӗске биографийӗ. Ҫав шутран Вячеслав Винокуровпа Сергей Бутяков танкистсем «СССР Геройӗ» хисеплӗ ята – Японипе Финлянди ҫӗршывӗсен ҫарӗсемпе пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче, Александр Казаков летчик-сӑнавҫӑ, Андриян Николаев летчик-космонавт вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче тивӗҫнӗ.

1941-1945 ҫулсенчи хаяр та хӑрушӑ вӑрҫӑра пирӗн ентешсенчен 76-шӗ Совет Союзӗн Геройӗсем пулса тӑнӑ. Ҫав хисепе тивӗҫнисенчен тепӗр 27-шӗ вара – республика тулашӗнчи чӑвашсем.

Мухтавлӑ паттӑрсем хушшинче Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Штанаш ял Совечӗн территорине кӗрекен Улаушкӑнь ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Алексей Романович Логинов лейтенант та пур.

... Пулас паттӑр ҫуралса ӳснӗ ял ӗлӗк, районсем йӗркелениччен, Чӗмпӗр кӗпернинчи Кӑрмӑш уездне кӗрекен Атай вулӑсне пӑхӑнса тӑнӑ. 1903 ҫулхи мартӑн 11-мӗшӗнче ҫав ялти чухӑн хресчен ҫемьинче Алексей кун ҫути курнӑ та ӗнтӗ. Вӑл 10 ачаран пӗри пулнӑ. Тӑхӑр ҫула ҫитсен ҫеҫ кӳршӗ ялти шкула чупма пуҫланӑ. Штанашри ултӑ ҫул вӗренмелли шкул хыҫҫӑнах пултаруллӑ ҫамрӑка вулӑс кантурӗнче писарь ӗҫне шанса панӑ. Шӑпах ҫак ҫулхи кӗркунне социализмла революци пулса иртрӗ. Ҫӗнетӳ хумӗсем ҫӗршывӗпех саланнӑ.

Чӑваш автономи облаҫӗ йӗркеленсенех Кӑрмӑш уездне пӗтернӗ, ҫавна май Атайпа Хӗрлӗ Чутай вулӑҫӗсенчи ялсем Етӗрне уездне куҫнӑ. Асӑннӑ вулӑссен центрӗсенче уездри милици уйрӑмӗн участокӗсем уҫӑлнӑ. Атайри милици участокӗн начальникӗ пулма Ишек салинче 1885 ҫулта ҫуралнӑ 36-ри Леонид Петрович Любимова ҫирӗплетнӗ. Вӑл Алексей Логинова делопроизводитель ӗҫӗпе тӗрӗслесе пӑхнӑ. Ҫамрӑк каччӑ ялти Елена Пахинова хӗре юратнӑ, 1924 ҫулта вара 20-ри пикепе мӑшӑрланнӑ. Республикӑра районсемпе ял Совечӗсем йӗркеленнӗ ҫулсенче А. Логинов хӑйсен ял Совет кантурӗнче секретарь пулса тӑрӑшнӑ. 1931 ҫулта 28-ти Алексей Романович Хӗрлӗ Чутайри милици уйрӑмӗнче секретарьте ӗҫлеме тытӑннӑ. Тепӗр виҫӗ ҫултан – Халӑх сучӗн секретарӗ. Кунта та икӗ ҫул сисӗнмесӗрех иртнӗ. Шалти ӗҫсен пайӗсенче вӗренсе ятарлӑ пӗлӳ илнӗ кадрсем кирлине шута илсе 1936 ҫулхи кӗркунне ӑна Шупашкара вӗренме янӑ. Ҫулталӑкран вӑл каллех Хӗрлӗ Чутая таврӑннӑ та нотариус пулнӑ, ҫак ӗҫпех пӗр тапхӑр Патӑрьел районӗнче те ҫӳренӗ.

1939 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче Алексей Романович Логинова Элӗк районӗнчи Халӑх сучӗн судйи пулма шаннӑ. Ҫакӑнта икӗ ҫул ӗҫленӗ. Пӗлӗвӗпе тавракурӑмне, принципла ҫирӗп характерӗпе кӑмӑлне кура 1940 ҫулта ӑна Коммунистсен партийӗн ретне йышӑннӑ.

Вӑрҫӑ кӗрлесе тухнӑ ҫул декабрьтен вӑл Комсомольски районӗнчи 2-мӗш участокра Халӑх сучӗн судйи ӗҫне кӳлӗннӗ. Анчах та, усал та ирсӗр тӑшман ҫарӗсем Мускава ҫавӑрса илессишӗн тапӑҫланнӑ тапхӑрта, декабрь уйӑхӗн ҫурринче ӑна фронта илсе кайнӑ. Малтанах – ҫар трибуналӗн членӗ. Офицерсем хатӗрлекен виҫӗ уйӑхлӑх курсран васкавлӑ майпа вӗренсе тухсан Логинов лейтенант Центральнӑй тата 1-мӗш Беларуҫ фрончӗн 61-мӗш ҫарти 356-мӗш стрелоксен дивизийӗ 1183-мӗш полкӗн 5-мӗш стрелоксен ротин взвод командирӗ пулса вӑрҫӑ ҫулӗсемпе малалла утнӑ: Украина ҫӗрӗнчен ҫӑткӑн тӑшмана хӑй йӑвине хӑваланӑ.

Хамӑр ентешӗн паттӑрлӑхӗ ҫинчен вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче «Чӑваш коммуни» тата Хӗрлӗ Чутайра тухса тӑракан хаҫатсен страницисенче уҫӑмлӑн ҫырса кӑтартнӑ. Статьясем, паллах, пӗрпӗринчен тӗрлӗ шухӑшсемпе тата содержани тӗлӗшпе чылай уйрӑлса тӑраҫҫӗ. Вӗсемсӗр пуҫне «Навечно в памяти народной», «Герои бессмертны», «Великая Отечественная война. 1941-1945», «Уроженцы Чувашии на фронтах Великой Отечественной войны», «Краткая Чувашская энциклопедия» тата ытти кӗнеке-справочниксенче те Совет Союзӗн Геройӗсем ҫинчен вуласа пӗлме май пур.

**Пирӗн умра Чӑваш кӗнеке издательстви 1987 ҫулта пичетлесе кӑларнӑ справочник. Унӑн 80-мӗш страницинче ҫапла ҫырнӑ:**

*«№ 91 от 7 октября 1943 года из наградного листа на лейтенанта ЛОГИНОВА Алексея Романовича, командира взвода 5-й стрелковой роты 1183 стрелкового полка 356-й стрелковой дивизии*

*Лейтенант Логинов А.Р. в боях с немецко-фашистскими захватчиками проявил мужество и героизм. Правильной расстановкой бойцов своего взвода противнику нанес большие потери в живой силе и технике.*

*25 сентября 1943 года в бою за станцию Репки Черниговской области, ворвался в станционное здание с группой бойцов и очистил его от противника.*

*26 сентября 1943 года в бою за Новоселки Черниговской области, со своим взводом ворвался в деревню и в завязавшейся рукопашной схватке уничтожил 15 солдат противника. За время боев им уничтожено 50 солдат и офицеров противника.*

*28 сентября 1943 года при переправе на западный берег реки Днепр с группой бойцов удалось достичь западного берега реки. В завязавшейся в неравной борьбе он пал смертью храбрых, но противнику нанес большой урон в живой силе.*

*За умелое и образцовое руководство боем, лейтенант Логинов А.Р. достоин награждения орденом Ленина и присвоения звания Героя Советского Союза.*

*Командир полка подполковник Коврига.*

*Указом Президиума Верховного Совета СССР от 15 января 1944 года лейтенанту Логинову А.Р. присвоено звание «Герой Советского Союза» (посмертно).*

*ЦАМО СССР: фонд №33, опись №686043, дело №3, лист №203.*

Паттӑрла вилнӗ чӑваш офицерне юлташӗсем Украина ССР-ӗнчи Черниговская облаҫне кӗрекен Репкино районӗнчи Новоселки ялӗнче пытарнӑ. Кунта ҫакна хушсан вырӑнлӑрах та пулӗ: Логиновӑн ывӑлӗ Михаил та фронтра ҫапӑҫнӑ, вӑрҫӑ чарӑнниччен виҫӗ уйӑх маларах рядовой салтак Польша ҫӗрӗ ҫинче вилнӗ.

Районти ҫар комиссариатне, Штанаш ял Советне тата Логиновсен ҫемйине икӗ усал хыпар ҫитнӗ. Савнӑ упӑшкине аслӑ ывӑлӗ вӑрҫӑра вилни Елена Егоровна Логиновӑна тата унӑн Егорпа Мария ачисене хытах хурлантарнӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн тепӗр икӗ ҫултан Логинов мӑшӑрӗ патне Мускаври Кремльтен ҫакӑн пек ҫыру ҫитнӗ:

*«Президиум Верховного Совета СССР, Москва, Кремль, 30 октября 1947 года. Логиновой Елене Егоровне*

*По сообщению военного командования, Ваш муж – лейтенант Логинов А.Р., в боях за Советскую Родину погиб смертью храбрых.*

*За героический подвиг, совершенный Вашим мужем в борьбе с немецко-фашистскими захватчиками по форсированию реки Днепр, Президиум Верховного Совета СССР Указом от 15 января 1944 года присвоил ему высшую степень отличия – звание Героя Советского Союза.*

*Посылаю Вам Грамоту Президиума Верховного Совета СССР о присвоении Вашему мужу звания Героя Советского Союза для хранения как память о муже-герое, подвиг которого никогда не забудется нашим народом.*

*Председатель Президиума Верховного Совета СССР – Н.Шверник».*




Ҫулсем иртнӗ май паттӑр Логинов тӑванӗсем те, пӗрин хыҫҫӑн тепри, ҫут тӗнчерен уйрӑлса кайнӑ. Егор ывӑлӗн мӑшӑрӗ, Ураскилт ялӗнчен качча килнӗ Вера Яковлевна Терентьева вилнӗ хыҫҫӑн тӗп килте никам та юлман. Вӗсен хӗрӗ – Галина Егоровна Медведева (1948-2019) Канашри педучилищӗн физкультура уйрӑмне пӗтернӗ хыҫҫӑн 30 ҫултан кая мар Тури Ҫӗрпӳкассинчи сакӑр ҫул вӗренмелли шкулта ӗҫлерӗ, ҫав ялти Лев Васильевич Медведев педагогпа пилӗк ача ҫуратса ӳстерчӗ. Логиновӑн хӗрӗ, Мария Алексеевна, Николай Федорович Гордеев механизаторпа ҫемье ҫавӑрнӑ. Медсестра 1955-1993 ҫулсенче хӑй ҫуралса ӳснӗ ялти участок больницинче ӗҫленӗ. Вырӑсушкӑнь ялӗнчен унта ҫитме ултӑ ҫухрӑм. Вӑл ӳркенмен, ҫав ҫул ҫинче кунсерен ҫӳренӗ хӑй ҫемйи патне: ҫурран та, велосипедпа та, йӗлтӗрпе те.

... Ҫӗр ҫинчен 40 ҫул ҫеҫ пурӑнса юлнӑ паттӑр офицерӑн мухтавлӑ та пархатарлӑ кун-ҫулне ҫывӑх тӑванӗсем те, Шалти ӗҫсен пайӗпе Ҫар комиссарӗчӗн сотрудникӗсем те, шкул ачисем те, таврари ял ҫыннисем те манмаҫҫӗ. Ун ячӗпе чылай ҫӗрте, ҫав шутра Элӗкпе Хӗрлӗ Чутай районӗсенчи краеведени музейӗсенче те, ятарлӑ стендсем йӗркеленӗ, вӑрман варринчи Горбатовка ялӗ ҫывӑхӗнчи ҫул хӗрринче чӑрӑшсен аллейине лартса чӗртнӗ. Кунсӑр пуҫне Штанашпа Ҫӗнӗ Атикассинчи вӑтам шкулӑн пионерсен дружининче тепӗр 20 ҫултан эпӗ те аслӑ вожатӑй пулса ӗҫлерӗм. Ҫав тапхӑр халӗ те куҫсенче ҫуталса тӑрать, мӗншӗн тесен, ҫамрӑк ӑрӑва тӗрӗс воспитани парса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе шкулсенчи пионерсемпе комсомол организацийӗсен тӳпипе пӗлтерӗшӗ уйрӑмах пысӑк пулнӑ.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ,**
**писатель-краевед.**

**Ӳкерчӗкре: СССР Геройӗ А.Р.Логинов лейтенант.**